27.05.2022 çулхи 29-мӗш № приказ
приложенийӗ

ÇИРӖПЛЕТЕТӖП:
«Чӑваш кӗнеке издательстви»
акционерлӑ обществӑн тӗп директорӗ
_____________ А.С. Иванов

**«Чӑваш романӗ» литература конкурсӗн**

# ПОЛОЖЕНИЙӖ

1. Пӗтӗмӗшле положени

1.1. «Чӑваш романӗ» литература конкурсӗ (малалла – Конкурс) унта хутшӑнас текенсен йышне, тӑратнӑ ӗçсем (хайлавсем) мӗнле пулмаллине, ӑмӑрту хӑш вӑхӑтра иртессине палӑртать.

1.2. Конкурса «Чӑваш кӗнеке издательстви» акционерсен обществи йӗркелет. Ӑна ирттерме Чӑваш Республикин Профессиллӗ писательсен союзӗ тата Чӑваш Республикин Наци библиотеки пулӑшать.

1.3. Конкурс Положенине тата ӑмӑрту çинчен калакан хыпарсене Чӑваш кӗнеке издательствин www.chuvbook.ru сайтӗнче, «ВКонтакте», «Телеграм» социаллӑ тетелсенче тата электрон массӑллӑ информаци хатӗрӗсенче вуласа пӗлме пулать.

2. Конкурс тӗллевӗ

2.1. Хальхи чӑваш литературине халӑхра анлӑ сарасси.

2.2. Чӑваш литературин аталанӑвне тивӗçлӗ тӳпем хывакан произведенисен авторӗсене хавхалантарасси.

2.3. Пултаруллӑ çамрӑк авторсене палӑртасси тата вӗсене пулӑшасси.

2.4. Литература хайлавӗсем çырма хавхалантарасси.

3. Конкурса хутшӑнмалли условисем

3.1. Конкурса Раççей Федераци территорийӗнче пурӑнакан, 18 çул тултарнӑ Раççей гражданӗсен хайлавӗсене йышӑнаççӗ.

3.2. Нацисене пӗр-пӗринпе тавлаштаракан, Раççей саккунӗсене хирӗçлекен тата усал сӑмахсем кӗртнӗ хайлавсене хутшӑнтармаççӗ.

3.3. Конкурс ӗçӗсем (хайлавсем) чӑвашла çеç пулмалла.

3.4. Урӑх чӗлхерен чӑвашла куçарнӑ хайлавсене пӑхса тухмаççӗ.

3.5. Пӗр автор Конкурса пӗр ӗç кӑна тӑратма пултарать.

3.6. Авторсен çӗнӗ, халиччен ниçта та пичетленмен хайлавпа çеç хутшӑнмалла.

3.7. Конкурса литература якатӑвӗ кирлӗ мар тата тӗплӗн редакцилемелле мар, жанрӑн илемлӗх требованийӗсене тивӗçтерекен хайлавсене кӑна йышӑнаççӗ.

3.8. Авторсем Конкурса тӑратнӑ хайлавсен автор прависем чӑнах та хӑйсеннех пулнине тата çак хайлавсемпе усӑ курмалли правсене тек никама та паманнине çирӗплетеççӗ. Куншӑн хӑйсем явап тытаççӗ.

3.9. Конкурс тӳлевсӗр.

3.10. Конкурс кашни çулах иртет.

4. Конкурс хăш вăхăт хушшинче иртни

4.1. Конкурс 2022 çулхи çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 2023 çулхи юпа уйăхĕн 2-мĕшĕччен пырать.

4.2. Конкурс ĕçĕсене (хайлавĕсене) 2022 çулхи çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 2023 çулхи çĕртме уйăхĕн 2-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

4.3. Жюри 2023 çулхи çĕртме уйăхĕн 2-мĕшĕнчен тытăнса 2023 çулхи авăн уйăхĕн 25-мĕшĕччен ĕçлет.

4.4. Конкурс пĕтĕмлетĕвĕсене 2023 çулхи çĕртме уйăхĕн 26-мĕшĕ – 2023 çулхи юпа уйăхĕн 2-мĕшĕччен пичетлеççĕ.

4.5. Конкурс хăш тапхăрта иртессине кашни çулах палăртаççĕ.

5. Конкурс тематики

5.1. Конкур ĕçĕсен (хайлавĕсен) тематики ирĕклĕ.

6. Конкурс ĕçĕсен (хайлавсен) мĕнле пулмалла

6.1. Конкурс ĕçĕсене (хайлавĕсене) электрон çырăвĕпе тата хут çинче пичетленине йышăнаççĕ. Хут алçыру варианчĕ DOC, DOCX, RTF форматлă пулмалла.

6.2. Хайлав калăпăшĕ – А4 форматпа 700 страница таран.

6.3. Калăпласси: А4 формат (çӳлти, аялти, сылтăмри тата сулахайри енĕ – 2 см), 14-мĕш кегль, 1,5 интервал, Times New Roman Chuv, Times ET Chuv шрифт.

6.4. Конкурс ĕçĕнче эрешсем (фигурăллă текст, виньетка буквица, фото, ӳкерчĕк) пулмалла мар.

6.5. Уйрăм страницăсенче çаксене кăтартмалла:

1) авторăн ячĕ-шывĕ (литература псевдонимĕ, паспорт çинчи хушамачĕ, ячĕ, ашшĕ ячĕ);
2) хайлав ячĕ чăвашла тата вырăсла;
3) хайлавăн чăвашла тата вырăсла çырнă кĕске аннотацийĕ;
4) автор адресĕ, телефон номерĕ, электрон почти;
5) авторăн чăвашла тата вырăсла çырнă кĕске биографийĕ.

7. Заявкăсене тата конкурс ĕçĕсене йышăнмалли йĕрке

7.1 Конкурс ĕçĕсене 2023 çулхи çĕртме уйăхĕн 2-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Пирĕн адрес: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 23-мĕш çурт, Чăваш кĕнеке издательстви, «Чăваш романĕ» конкурса; электрон адресĕ: zyru-lax@rambler.ru («Чăваш романĕ» конкурса тесе палăртмалла).

8. Конкурса пĕтĕмлетни тата çĕнтерӳçĕсене палăртни

8.1. Конкурса ятарлă жюри пĕтĕмлетет. Жюри комиссине кашни çулах Чăваш кĕнеке издательствин приказĕпе çирĕплетеççĕ.

8.2. Хаклас йĕркен тĕп критерийĕсем:

1) Конкурс жанрĕпе тата тематикипе шайлашăнни;
2) хайлавăн чĕлхипе стилĕн хăйне евĕрлĕхĕ;
3) хайлав оригиналлăхĕ;
4) материала çĕнĕлле кăтартни;
5) литература мелĕсене пĕлни тата илемлĕх хатĕрĕсемпе усă курни;
6) автор идейин уçăмлăхĕ, граждан позицийĕ.

8.3. Жюри темиçе çĕнтерӳçе те палăртма пултарать.

8.4. Чи нумай балл пухнă авторсем çĕнтерӳçĕ дипломне тивĕçеççĕ, вĕсен хайлавĕсене Чăваш кĕнеке издательствин кăларăмĕсен тематика планне кĕртеççĕ.